варианчĕсене çырса кăтартма кирлĕ тесе шутланă, вĕсене, ялан тенĕ пекех, словника уйрăммăн кĕртнĕ. Сăмахран, шаркку «жаркое» сăмахăн çакнашкал калаçу тата диалект варианчĕсене панă: шарик, шарăкку, шаркай, шарку, шаркуй, шаркох, шаркkуй, шарков, шарккoль, шаркkух, шаркkох; кунсăр пуçне пĕр статья текстĕнче реестра кĕмесĕр юлнă шарков вариант пур. Пиçихxи сăмах варианчĕсем тата нумайрах: пилĕкçи, пиçĕкки, пиçики, пиçикки, пиçихи, пиççи, пиççикки, пиçхи, пичикки, пиххи, пуçаххи, пуçи, пуççи, пуçхи, пыçаххи, пыçи, пыçыхи, пыççи, пыçхи, пилĕк çыххи.

«Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» наукăпа практикăри пысăк пĕлтерĕшне шута илсе, эпир унти материала хисеп тĕлĕшĕнчен ятарласа тишкерсе тухас терĕмĕр. Çак тĕллевпе кашни саспаллипе миçе словарь статйи пулнине, вĕсем пуплев пайĕсем тăрăх епле валеçĕннине шутларăмăр. Пĕр сăмаха тата темиçе сăмахлă пĕрлешĕве ăнлантаракан статьясене уйăрнă, пайăр ятсене уйрăммăн шутланă. Çак статистика тишкерĕвĕн пĕтĕмлетĕвне таблица туса кăтартнă.

Лексикографин тĕп правилисенчен пĕри вăл - ăнлантару текстĕнче тата иллюстраци тĕслĕхĕсенче словникра çук сăмахсемпе усă курма юраманни. Урăхла каласан, словарь статйинче пĕр-пĕр лексика элеменчĕ тĕл пулать пулсан, ăна реестра кăларса ăнлантармалла. Словарьте вара ку ĕçе туса ирттермен. Тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать. Çапла, йанкар статьяра кĕйтерет глагол, паппаçă статьяра мăнассип япала ячĕ тĕл пулать. Реестра кĕртмен сăмахсем «ăссăр» такмаксенче, ача-пăча вăййисен сăмахĕсенче, шутларăшсенче уйрăмах нумай. Урăн-чарăн статьяра кикĕр, çӳ, шарка-шарка сăмахсем, йана тарай статьяра - таракас, пыл таккой, йотнай, пох, снавай /реестрти снавай «становой» кунпа пĕр килмест пулмалла/, охваттьар, опльосни, ни нушни /нушни уйрăммăн пур, анчах, ытти тĕслĕхсене кура, реестрта ни нушни пулмалла, çитменнине ни татӑк та словаре кĕмесмĕр юлнă/, криччи, крич, чĕрсалами, оххини пур т.ыт.те.

Чăн та ĕнтĕ, кусем пурте пекех - палламалла марах пăснă ют сăмахсем /пыл таккой, ни нушни йышши элементсем пуррине шута илсе, ытти сăмахĕсем те вырăс чĕлхинчен кĕнĕ тесе шутлама пулать/, е пĕлтерĕшсĕр сасă пĕрлешĕвĕсем. Урăхла каласан, чăваш чĕлхин ятпару фондĕнче вĕсем валли вырăн пулмалла та мар пек. Анчах ытти çакнашкал сăмахсене реестра тăтăшах кĕртнĕ пирки кун пек сикчĕсем словарь системине пăсни пулаççĕ, тесе калама тивет.

Словник йĕркелессипе çыхăннă кăлтăксем словарьте татах пур. Уйрăммăн илсен, тăхăм ячĕсемпе /вырăсла родовые названия/ тĕс ячĕсене /видовые названия/ лексикографи мелĕсемпе пĕрешкел çыхăнтарса кăтартни çук. Пайăр тĕс ячĕсене ытларах уйрăм статьясенче çырса кăтартнă, анчах ку йĕркене пур чухнех те тытса пыман. Çапла, анис сортлă панулми тĕсĕсен ячĕсем - хĕрлĕ анис тата шурă анис - реестрта çук, вĕсене анис статьяра панă. Кăмпа тĕсĕсен ячĕсене уйрăмшарăн панă, çав вăхăтрах кăмпа пайĕсен ячĕсене - тĕп сăмах статйинче /кăмпа аври, кăмпа тăрри, кăмпа шлепки/. Нумай объектсен кĕске тата тулли, анлă ячĕсене пĕр статья реестрĕнче кăтартнă: анăс, анăс курăкĕ «девясил». Теприсене /вăл шутра çав сăмах вариантнех/ урăх тĕрлĕ çырса кăтартнă. Акă, антăс тата антăс курăкĕ «девясил» - уйрăм статьясенче. Анлă ятсен варианчĕсене те икĕ тĕрлĕ панă. Кирпични чей тата кирпĕч чейĕ - пĕр статьяра, йыт çĕмĕрчĕ, йит çĕмĕрчĕ - тĕрлĕ статьясенче. Сăмахсен варианчĕсене пĕр çĕрте ушкăнласа пĕр статья реестрне кĕртнĕ, тепĕр çĕрте тĕрлĕ статьясенче çырса кăтартнă, сăмахран, нумай, номай, нуммай вариантсем пĕр статьяра, нуçилке, ноçилккă, ноçилкка вариантсем -тĕрлĕ статьясенче.

Хамăрăн статьяра эпир Н.И.Ашмарин словарĕнчи сăмах йышĕн тытăмĕпе тата ăна кăтартса, ăнлантарса памалли меслетсемпе çыхăннă хăш-пĕр ыйтусене кăна хускатрăмăр. Вĕсене тĕплĕн, хальхи ăслăлăх çитĕнĕвĕсене тата лексикографи опытне шута илсе тишкересси - чăваш чĕлхе тĕпчевçисен чыслă тивĕçĕ.

* * *

Н.И.АШМАРИН

# ЧĂВАШ СЛОВАРĔ ПУХСА ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПРОГРАММА

**Хутла пĕлекен чăвашсене словарь валли тĕрлĕ материал пухма анлă явăçтарас тĕллевпе Н.И.Ашмарин 1900 çулта ятарлă программа пичетлесе кăларнă. Словарь валли халăх чĕлхин пуянлăхне тĕллевлĕн пухас ĕçре вăл пысăк вырăн йышăннă. Анчах унта кĕртнĕ ыйтусем паянхи кун та чăваш чĕлхи пĕлĕвĕшĕн, этнографишĕн, тăван ял культурине тĕпчекенсемшĕн паха. Наци чĕрĕлĕвĕн тапхăрĕнче мăн асаттесен ăс-хакăл еткерне, халăх сăмахлăхĕн ахах-мерченне пухса, упраса хăварасси çĕнĕрен вăй илсе пырать. Ку ĕçре вулакансене Николай Иванович шăп 95 çул каялла кăларнă программа та пулăшĕ. Программăна авторăн ăнлантару кӳртĕмĕсĕр пичетлетпĕр.**

* * *

1. Халăхсен ячĕсем, вĕсем пулса кайни çинчен калакан легендăсем. Чĕлхе пулса кайни, нумайчĕлхелĕх сăлтавĕсем.

2. Чăваш халăхĕн ячĕ ăçтан пулса кайнă?

3. Чăваш чĕлхинче çак ятсем евĕрлĕ сăмахсем çук-и: угур, ухур, уйгур, унгар, мадьяр, хазар, бешене, печенег, булгар, куман, орк, берендей, шаркан, босоркань, сэгень, бигер, алмас, анбал?

4. Чăвашсен çак сăмахĕсем мĕне пĕлтереççĕ: Вулăра вырттан ырăсем, Кăвак асман, Хай пӳ /е/ рен, Хай çырми, Чар пӳрен, Кепе, кирелли /ĕ/, мамале /мемеле, мамаля/, Киви çĕрĕ, Пӳртен, шатăн, Юхма, карман, хăрхăн, ăрăс, Искемер, Атам /турă/, тала /турă тала/, ахах, ĕнчĕ, мерчен, кăкар /яп.ячĕ/, тӳрккес, шăрт /чӳк-кĕлĕ вырăнĕ/, палкă?

5. Чăвашсем ăçта та пулин «свидетель» пĕлтерĕшлĕ кӳнтелен тата тынă сăмахсемпе усă кураççĕ-и?

6. Юхан шывсен, кӳлĕсен, сăртсен, вăрмансен, варçырмасен, уйсен тата ытти вырăнсен чăвашла ячĕсем; вĕсем ăçта вырнаçнă, мĕнле легендăсемпе çыхăннă.

7. Чăвашсем урăх çĕртен куçса килни çинчен мĕнле те пулин преданисем çук-и? Вăл преданисенче мĕн каланă? Çавнашкал халап-юрăсенче Крыма асăнни çук-и /мĕншĕн тесен унта чăвашла вырăн ячĕсем пур/?

8. Хуласен, ялсен, касăсен, выççăлкăсен, урамсен т.ыт. чăвашла тата вырăсла ячĕсем. Ялсем çинчен, вĕсем пуçланса кайни çинчен калакан преданисем.

9. Хусан кĕпĕрнинчи Спасск уесĕнче /хальхи Тутарстанăн Куйбышев районĕ/ чăвашсем Булгары /вăлах Успенское/ ялне мĕнле калаççĕ? Чăвашсен ун çинчен преданисем е юрăсем çук-и?

10. Пӳлер тени чăвашла мĕне пĕлтерет? Чăвашсем мĕнле ила çапла калаççĕ?

11. Пасарсен, ярмăрккăсен, халăх уяв тăвакан вырăнсен ячĕсем. Çавнашкал вырăнсене пухăннасси епле пуçланса кайни çинчен калакан преданисем çук-и?

12. Çын ячĕсем, хушаматсем, хушăм ятсем, тăрăхлавлă ятсем; ятсемпе çыхăннă тăрăхлавлă юрă-такмаксем, каларăшсем. Май пулсан, ятсен тупсăмне ăнлантарса памалла.

13. Çепĕçлĕх, ачашлу ячĕсем.

14. Чăвашсен тĕнĕ, вăл пулса кайнине чăвашсем епле ăнлантараççĕ? Мочаур тени мĕне пĕлтерет /ĕлĕк-авал чӳк пуçне çапла каланă имĕш/. Ку форми пăсăкскер, ăна тĕрĕсрех мĕнле каламалла?

15. Тĕнче пуçланса кайни çинчен калакан преданисем. Тĕнчене шыв илни çинчен калаççĕ-и? Чăваш туррисен ячĕсем, вĕсен пĕлтерĕшĕ. Юмахри паттăрсемпе ытти сăнарсем. Вупăр, арçури, вутăш, вĕре çĕлен /вĕри çĕлен/, шыври, хĕртсурт, эсрелĕ, пирĕшти, вупкăн т.ыт. çинчен çӳрекен халапсем. Турăсемпе киреметсем çинчен çӳрекен легендăсем. Киреметсен ячĕсем. Ырăсем, вĕсен вырăнĕсем, ку ятсене мĕнле ăнлантараççĕ?

16. Христиан çветтуйĕсем çинчен çӳрекен тĕшмĕшле легендăсем. Чиркӳсемпе, вĕсенчи япаласемпе, турăшсемпе çыхăннă тĕшмĕшлĕхсем.

17. Халăхра Иисус Христос, турамăш, апостолсем çинчен çӳрекен халапсем. Чăвашсем хушшинче

мусульмансенчен илнĕ тĕн легендисем çук-и?

18. Тĕне кĕмен чăвашсен уявĕсемпе паллă кунĕсем.Кĕлĕ-чӳк йĕркисем.

19. Юмçă, вĕрӳçĕ, асамçă, ăрăмçă, тухатмăш, пăсăмçă; вĕсен пĕлтерĕшĕ тата вĕсем çинчен çӳрекен халапсем.

20. Чăвашсен çĕр ĕçĕпе тата пурнăçри тĕрлĕ событисемпе çыхăннă мешехисем. Ача çуралнипе, çын вилнипе çыхăннă йăла-йĕрке. Авалхи йĕркепе ят мĕнле хунă? Ваттисене асăнни, виле пытарни. Тĕне кĕмен чăвашсен туй тата уйрăлу йĕрки.

21. Уявсем. Улах. Ĕçкĕ. Юрă-кĕвĕ, музыка инструменчĕсем. Вĕсен пайĕсене тĕплĕн каласа тухмалла. Юрă-кĕвĕ пуçланса кайни, кĕвĕçсем çинчен, вĕсен асамлă вăйĕ çинчен çӳрекен халапсем. Купăççă-кĕслеçĕсем усă куракан ятарлă сăмахсем.

22. Чир-чĕрсем, вĕсен ячĕсем, сиплемелли мелсем. Чăвашсем чир-чĕр тухни çинчен мĕн шутлаççĕ? Вĕрӳ-суру чĕлхи. Эпи карчăксем, вĕсен мешехисемпе терминологийĕ.

23. Ача-пăча вăййисем, теттесем, вĕсен ячĕсем - тĕплĕн çырса кăтартмалла.

24. Юмахсемпе преданисем.

25. Сутмалли юмахсем, каларăшсем, ваттисен сăмахĕсем. Шӳтсем. Сăнанисем.

26. Тĕн сăвви-юрри. Ыйткалакансем калакан кĕвĕсем.

27. Юрăсем. Такмаксем.

28. Ятлаçу, ылхану сăмахĕ-пуплевĕ. Тупа туса каланисем тата тупа тумалли йĕркесем.

29. Тăванлăх ячĕсем.

30. Тум-тирсен, хĕрарăм çи-пуçĕн, тĕрĕ-ӳкерчĕксен тата ыттисен ячĕсем. Тĕрĕ тĕрлес ĕçре усă куракан терминсем.

31. Апат-çимĕç, ĕçмесем. Вĕсене хатĕрлемелли мелсем. Ĕçме-çимепе çыхăннă тĕшмĕшлĕх.

32. Вăрманти, уйри йывăç-курăк, пахча çимĕç, тырă-пулă ячĕсем; вĕсемпе халăх медицининче усă курни. Ӳсен-тăрансенче асамлă вăй пурри çинчен халапсем çӳремеççĕ-и?

33. Кăмпа ячĕсем.

34. Килти тата ирĕкри кайăк ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă халапсемпе тĕшмĕшлĕх.

35. Килти выльăхсен тата ирĕкри чĕрчунсен ячĕсем, вĕсем çинчен калакан легендăсем.

36. Пулăсемпе пулăç хатĕрĕсен ячĕсем. Пулăсемпе çыхăннă халапсемпе тĕшмĕшлĕх.

37. Çĕлен-калта, хурт-кăпшанкă ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă ĕненӳсемпе легендăсем.

38. Пӳрт-çурт тавраш̆ĕ. Килти хатĕр-хĕтĕр.

39. Кил хушши, унăн пайĕсем; хуралтăсем çинчен тĕплĕн çырса кăтартмалла.

40. Ут тавраш̆ĕ, урапа-çуна. Вĕсен пайĕсене тĕплĕн çырса кăтартмалла.

41. Арман, унăн тĕрлĕ пайĕсен ячĕсем. Кĕрпе арманĕ. Армансемпе тата арманçăсемпе çыхăннă тĕшмĕшлĕх. Арманçăсем хăйсен ĕçĕнче мĕнле ятарлă сăмахсемпе çаврăнăшсемпе усă кураççĕ?

42. Ал ăсталăхсен ячĕсем; вĕсем çинчен каласа пани.

43. Çуна тупанĕ, урапа тукунĕ туни, çав ĕçре усă куракан хатĕрсем. Пичке хăми хатĕрлени, унпа çыхăннă терминсем.

44. Пушăт сӳни, курăс-мунчала туни, чăпта çапни. Çак ĕçсемпе çыхăннă ятарлă терминологи.

45. Йĕтĕн, кантăр, вĕсене ĕçлени. Терминологине тĕплĕн кăтартмалла.

46. Çăм тапни, унăн тулли терминологийĕ.

47. Çип арлани, пир тĕртни. Кĕнчелеçси, пир станĕ; пайĕсен ячĕсем, вĕсем мĕн тума кирлĕ. Тĕрлĕ йышши пир-авăр тĕртсе туни, ку ĕçпе çыхăннă терминсем.

48. Тăла пусни, ку ĕç терминологийĕ.

49. Çĕвĕ ĕçĕ, унăн хатĕр-хĕтĕрĕ, терминологийĕ.

50. Çăпата туни.

51. Платник ĕçĕ; ĕç хатĕрĕсене тата платниксен ятарлă сăмахĕсене тĕплĕн çырса кăтартмалла.

52. Тимĕрçĕ ĕçĕ, унпа çыхăннă сăмахсемпе çаврăнăшсем. Тимĕрçĕсем çинчен, вĕсен ĕçĕ çинчен çӳрекен халапсем.

53. Сунар ĕçĕ. Кайăк тытмалли мелсем. Сунар хатĕрĕсем, сунарçăсен чĕлхинчи хăйне евĕр сăмахсем.

54. Хĕç-пăшал. Ухă тата ухă йĕппи ячĕсем. Мĕн вăл укçу? Мĕн вăл ухă тата çĕмĕрен? Пăшалăн тĕрлĕ пайĕсене мĕнле калаççĕ? Чăвашсен пăшалпа çыхăннă халапсемпе тĕшмĕшлĕх çук-и?

55. Уй-хир ĕçĕсем, унта кирлĕ хатĕрсем - пурин çинчен те тĕплĕн каласа памалла. Çĕр ĕçĕпе çыхăннă тĕшмĕшлĕх тата сăнанисем. Ку ĕç терминĕсем.

56. Уй-пусă пайĕсен ячĕсем. Çĕр лаптăкĕн виçисем /тĕслĕхрен хăш-пĕр çĕрте чăвашсем ăна утăмпа, авăнлăхпа, çурпилĕкпе виçеççĕ/.

57. Вăрăмăш, йывăрăш, шĕвĕ тата сапăнакан япала виçисем. Вăхăт виçисем. Укçа шучĕ. Чăвашсен пус «копейка» сăмахĕ ăçтан тухнă? Унăн тата урăх пĕлтерĕш çук-и?

58. Тӳпери çăлтăрсен, вĕсен ушкăнĕсен ячĕсем. Вĕсемпе çыхăннă халап-юмах.

59. Атмосфера пулăмĕсен ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă легендăсем, сăнанисем.

60. Çĕр, шыв, вут тата сывлăш çинчен çӳрекен легендăсем. Вутпа шыв кĕрешни çинчен çӳрекен халапсем.

61. Çут тĕнче енĕсен ячĕсем.

62. Металсемпе минералсен ячĕсем.

63. Чăвашсен çырулăх пулнă-и? Вĕсен çырăва, саспаллисене палăртмалли авалхи сăмахсем пулман-и? /çыру сăмахсăр пусне/.

64. Тутарсемпе кӳршĕллĕ пурăнакан чăвашсем тутар ачисем куçăхасран-пăсăласран çыхса çӳрекен ботой ятлă амулетсене /кĕлĕ сăмахĕсем çырнă хут таткисене/ мĕнле калаççĕ?


# Николай Ашмарин

"Хыпар" кĕнеки, 17 №

М.И.Скворцов профессор пухса хатĕрленĕ.

Шупашкар, 1995, юпа, 27.

Тираж 44349

Тĕп редактор: А.П.Леонтьев.

Редактор: Р.П.Прокопьева.

Кĕнекене кăларнă ушкăн: О.А.Алексеев, В.И. Филиппов, А.Г.Михайлов.

428019, Шупашкар, Яковлев проспекчĕ, 13